К 84.09(=ЧУВ)
В55
Ч-44813

Клавдия Вишневская



# ЧУНЛĂ КУПĂС

## (Душевная гармонь)

**Поэма**

Шупашкар
2005

Национальная библиотека ЧР
4-044813
с. Чув.)6

Вишневская К. И. Чунлă купăс (Душевная гармонь) поэма. Чебоксары, 2005.

ça

ав на

ăм олать.

05.

К84.09(=Чув)
В55

# ЧУНЛĂ КУПĂС

## *Поэма*

### 1

### Атте купăсĕ

Тĕнчере ыр чунлисем
Купăсшăн пулас.
Унăн сассине илтсен
Йытă та юрлать.

Купăса кĕртет-çке чун
Вылякан пӳрне.
«Пĕрнере» – хăватлă кун,
Турт, эс, ан ӳркен.

Ăстаçа ыйтаççĕ - çке
Пуç тайса чунтан.
Чунăм-туйăм вĕçекен
Кĕвĕллĕ пулсан.

Купăс сассинче – тăван,
Пур чунтан савни.
Эсĕ мĕн чухлĕ çунан –
Пурнăç – савăнни.

Чун парать сана... тата
Ыттисене те.
Ташша çапать пек пăта–
Çĕнĕ вăй – пирте.

Чунсăрри те чунланать,
Мĕн каласси пур!
Çирĕп пăта – хыр хăмана:
Çемĕпе çĕклентĕр çурт.

Савăннине мĕн çитет...
Купăс пулăшать.

Пултăр тесен ырă кун,
Купăсапала[illegible] пултăр чун.

И-44813
Национальная библиотека Чувашской Республики



Проверено 11 ОКТ 2017

Ырӑ туйӑмлӑ пурте –
Кӑмӑл, ҫит ӑша.

Ҫыннӑн ырлӑх ӑшшипе
Пуҫланать ҫут кун.
Ыршӑн иртӗ вӑл чипер:
Юрӑ юрлӗ чун.

Ан пытарӑр купӑсна,
Вӑл пӗтмест нихҫан.
Ӗмӗрне пӗлет тӑсма:
Чунӗпе – хуҫа.

Тӗлӗнсе ыйтакансем
Пулӗҫ-мӗн манран.
– Пур-шим чунлӑ купӑссем? –
Пӗлӗҫ - ха кайран.

Ҫийӗнчех каламасан
Тен, кӳренӗҫ - ха.
Кӑмӑла ярам уҫса,
Купӑс янрӗ халь.

Эх! те эх! шарт та шарт!
Ик уран тапӑртатать.
Пилӗкне тытса вӑр-вар
Мӑшӑрӑм ташлать.

Маттурри эп мар пулсан,
Кармунь пултарать.
Тунсӑха сирет пуссах
Шухӑша кайсан.

Юрласан юрлаттарать,
Ташласан ташлаттарать.
Кашни тӳмми – чун...
Пиҫ, шӑрттан, кӑмакара –
Ырӑ шӑршӑ, тух.

Ӑмсанса этем чунне
Ҫӗр – анне саватъ.

Чун тени кирлех чăнне –
Пурăнма аван.

Пĕр-пĕрне çапла савни
Пурăнăç парать.
Чун юрласа ташлани –
Çӳрени пек юмахра.

Йăл куллилле купăс ак
Пĕчĕк пуйăс пек.
Çамрăкланать чун курсах –
Янăратăр ĕмрипех.

Асилӳ те сахал мар
Унăн ĕмринче.
Ятарласа авланма
Купăс илнĕ ман атте.

Вăхăт лаша сиккипе
Кайнă малалла.
Çуралса ыр аннепе
Çитĕп кĕç алла.

Хĕрĕх саккăр саккăрла
Сикрĕ ман умра.
Çĕнĕ михĕ, эс, нăрлат –
Йывăр чунăмра.

Килнĕ хуйха çĕнĕрен
Сирĕп купăспа.
Аса илӳ килнĕрен
Уçă – чун туспа.

Аттен кивĕ кармунне
Патăм чăваш музейне.
Аса илĕç хăш чухне
Поэт кăмăлне.

Чирлеттерен чирсене
Усрăп купăспа.
Усал чир – чунлисене
Курăп Турăпа.

Усал турĕç те, путма
Ячĕç пĕвене.
Тур ачи шывра путмасть –
Тав атте – аннене.

Атте алли – ăсĕпе
Пурăнтăм çапла.
Анне ырлăх пўрнипе
Хут купăс калап.

Чăн чунах хăй виличчен
Илсе пачĕ ыр Анне.
Вăл çĕн купăс пĕтиччен
Манпа ялан киленет.

Ачаш чунлăччĕ Атте...
Пит тăсаччĕ купăса.
Уявах пирĕн килте –
Пухчăр ачисем ăса.

Чунăмран пулман начар
Ырлăх пулнăран.
Юрату килте – ача.
Пулмĕ хĕр ача кăра.

Атте, Анне ырăран
Ăшăччĕ чуна.
Ачисене савнăран
Мĕн пурри – сана.

Купăс каласан Атте –
Кăмăллă тем пек...
Линкка – линкка ташлать Анне –
Юратуллă эх!..

Тек, Атте, Анне, сире
Усрăттăм татах.
Манăн пур çитĕнўре
Сирĕн ăс пурах.
Тавах. Тавах.

Эсир панă чунăма
Турă пулăшать.
Вăл курать, усал туман
Халиччен те никама.

Кирлĕ мар мана усал,
Туслă мар унпа.
Курас çук унпа усах
Ырă мар çынпа.

Купăс юратмасть куштан,
Ырă мар хуçа.
Çут ăса тапта – тапта
Хăй çулне уçать.

Путарса пур кăмăла
Шырĕ вăл юлташ.
Тăшмана пулах
Ан пăсăл, юнташ.

Купăспа пĕрле пурнар,
Тусăм – Пирĕшти.
Унăн сассипе кăна
Хĕрĕ çын ташши.

Хут купăспа ташласан
Хăпартланать чуну сан.

## 2

## Мĕншĕн?

Аса илӳ вĕçĕмех пулни –
Иртнĕ ĕмĕре тăсни.

Хĕрсе кайсах ташласан
Купăссă канма манать.
Маттурри аван калать,
Ман пекки-мĕн ывăнать.

Çанталăк панă вăй-хала
Кăтартма та намăс мар.
Ӳпкелетĕп эпĕ хам алла

Ывăннишĕн вăл туртма.

Пулман таланта кайран
Хăть ятлаç эс, хăть мухта –
Пулмăн çав талантлăрах...

Мăнакки мана мухтать.
– Купăс чĕлхине пĕлен.
– Акка, эсĕ тем.Тăхта,
Епле эп ăна пĕлем?

Сăмах май пĕлес килет
Кивĕ купăс шăпине.
– Авă  аçу. Вăл пĕлет.
Ыйт. Тен, уçĕ хуйхине.

Купăс савăнăç пулсан,
Мĕншĕн хуйхине теет?
Атте пăхрĕ йăл кулса.
– Ман пĕлес килет, атте.

– Илтрĕм-ха мĕн кирлине...
Аса илме – йывăр халь.
Тур(ă) тăратсан ирхине,
Каçхи калăп... Пĕлмес-ха.

Питĕ кăмăллă атте
Манман сăмах панине.
Чун купăсне илчĕ те
Аса илчĕ иртнине.

3

## Колхозра

Ĕҫлет чăваш, ҫаплах ĕҫлет:
Тарпа тупасшăн вăл телей.

Ялта каҫпа та ĕҫ нумай...
Иван тупайрĕ май
Укҫа тума.

Колхоз ĕҫшĕн «патак лартни» –
Чăваша выҫă хăварни.
Ырми-канми ĕҫлесен те,
Укҫи кĕмест кĕсйене.

Вара ирĕксĕртен
Атте
Шутлать укҫа тума тиртен.

Ăна тума та ирĕк ҫук.
Шырамалла ун вăрттăн ҫул.

4

## Ĕҫ мăрси

Ҫип ăҫта синче,
Ҫавăнтан татăлать.

Авланма Иван пасартан
Илсе килнĕ ҫĕнĕ купăс
«Шуйский».
Чаплă. Туртнă – туртман
Сасси кайнă инҫете. –Упрăр! –
тенĕ сутăҫ.

–Ăҫтан упран ҫук пурнăҫра?..
Пур ялĕпеле – пĕр купăс.
Ҫӳре-ҫӳре туя туйран
Миххи пĕтрĕ, шельмă, тупăс!
Шелле-шелле хам купăса
Хушăран туртса пăхаттăм.

Калама-калаттăм ăста. –
Пуçне хыçать атте кăтăр-р!..

– Купăс суранне сыватма
Юсаканни ниçта çук.
Вăхăт çитрĕ авланма.
Мĕн тумалла халь аçун?

Канмасăрах тир хырмалла
Çĕрле çынсем çыврсан.
Укçа тарпа пуçтармалла
Ĕç шăршиллĕ мăрсан.

5

**Атте**

Ĕç ĕçчене юрататъ –
Выçă хырăма сават.

Шеллемен хăйне Атте:
Чухăн пулнă килĕнче.
Пăхнă унăн куçĕнчен
Чирлĕ амăш виличчен.

Ахальтен пулман Атте
Вун виççĕрех сухара.
Çиме çук апат килте,
Ĕçленĕ выçах уйра.

Вăл аса илсен епле
Куçĕ илет шывланса.
Çăмăл мар уй ĕçпеле
Пурăнмашкăн тăранса.

Чăваша ялан çапла
Хĕстерет пурнăç пуссах.
Кам пурăннă – ши чаплах?
Алăри саккун – кусар.
Вăтăра Иван çитет.
Тир ĕçĕпе хĕпĕртет.
Хырăмĕ унăн ÿсет

Çинипе çĕрлесерен.

Çимелле çĕрле ирччен:
Мышцăсем ыйтаç ĕçпе.
Укçапа тăраниччен
Çимесен
Юлан хĕç пек.

Хырăм ўснĕ. Çăхавлама
Сăлтав пур шухăшлама.
– Пăх та кур! – Кулак алли! –
Тытăнаç ялтан хăвалама.

Укçапа çук лăпланма:
Шĕкĕ евĕр ăмсану –
Кăшлать, памасть пурăнма...
... ... ...

6

**Чăвашсен йăли**

Чăваш ĕçе кăна мар,
Искусствăна пĕлет хаклама.

Чипер чăваш пикисем
Пулнă ăста пур енчен.
Юрăпала ĕçлесе
Пăрăннă хурлăхĕнчен.

Качча тухма ун чухне
Тăмрапа каламалла.
Пĕлмесен
Пулмĕ мăшăр ĕмĕрне,
Ват хĕр тулĕ ку яла.

Çавăн пекех каччăсем.
Купăс калама пĕлсен
Савĕç сана ырăсем –
Пынă йăла чăвашсен.
Епле савмăн Ивана:

Куҫӗ кӑвак тӳпе пек.
Кӑтриййӗ пуҫ хӗррипе
Илем кӳрет сар тӗспе.

Ун пек качча ялӗпе,
Тен, пулман та. Каламасть.
Урам тулнӑ купӑспе,
Тухнӑ хӗрсем суйланма.

Чакӑр хӗрсен куҫӗсем,
Пӗр(и)-тепри чипертерех.
Иван каять хӗрсех –
Купӑс сасси илемлӗрех.

7

## Эх! Иван!

Купӑслӑ хӗрсен сасси –
Янӑрать Шӑнар касси.

– Эх! Иван, сар Иван,
Хӑҫан эсӗ авланан?

Сан пекки ҫуках ялта.
Тӑран авӑтсан автан.

Яш Иван та такмаклать
Купӑсне кала – кала:

– Мана савӑр - ха хӗрсем!
Саррисем, чиперрисем.

Ик ҫӳҫ хӗрри кӑтрисем,
Явӑн-явӑн ҫивӗтсем.

– Вӑйӑа тухмӗҫ сан хӗрсем.
Качча тухнӑ-ҫке пӗлсем.

Эх! Иван, кӑтра Иван,
Эс хӑҫан-ши авланан? –
Кулса ыйтнӑ хӗрӗсем
Юрласа питленӗҫем.

– Саншăн çунчĕ сар Анна.
Ватта юлчĕ, авланах!

Чăн - чăнах ку, чăн сăмах!
Хăв та эсĕ ват хусах!

Анни пит юратнипе
Çывăрайман çĕрĕпе.

Вăл çухатнă канăçне,
Аçа çапнă ăшчикне.

Çунса тухса кулянать –
Ял пĕлнишĕн тарăхать.

Аçа çапнă юрату –
Хĕр чунĕшĕн çук тату.

Турă паман Аннана,
Çавăраймасть Ивана.

Кашни çавăрас пулсан,
Тĕнчере юлмĕ усал.

Иван çаплах хĕр суйлать,
Килĕшнине тупаймасть.

– Мана савăр – ха, хĕрсем!
Анна пек мар, сыввисем!

Сарă качча юрла-юрла
Савманнине тек хурлать.

Вăхăт иртет, иртет кун - çул,
Кĕçех тулать вăтăр çул.

– Халь тин сана, ват качча,
Эпир тухас çук качча. –
Юрлаç çамрăк пикесем
Купăс кĕвве илнĕçем.

Вăт çапла хăюланса
Хĕрсем юрлаç ташласа.

– Вăтанакан ватăлать –
Тăр-пĕчченех хăш юлать.

–Мăшăрсăр юлать Иван.
Вăл авланĕ-ши хăçан? –

Çаптараççĕ хĕрĕсем
Савăнса юрланăçем.

Купăса
Тăса-тăса
Иван каять хуйхăрса.

8

## Хусах Иван

Хăпаймасть Иван тарса:
Хĕрсем тытаç, иçмасса.

Шахвăртаççĕ такмакпа.
Ăс параççĕ Ивана.
Тĕксе илсе сăмахпа
Тăн кĕртеççĕ каччӑна:

– Вăл çапла та, ку çапла:
Анна савать Ивана.
Юратăвĕ суккăрла –
Иван савать Соньăна.

– Саватăп , савап, – терĕ.
– Санах саватăп, – терĕ.
– Инке арăмĕ те хĕрĕ
Сана. –Паян пыр, – терĕç.

Илтсенех Иван шартах!
Пусса лартать кармунне.
Ăнланчĕ вăл йăлтах –
Хĕрсем иллеç ун чунне.

Хěрсе кайнă пикесем
Ěçлекен пыл хурчě пек.
Кулса такмакланăçем –
Иван тарчě пуçěпех.

Ун хыççăн Иван тухмасть
Хěрсемпеле урама.
– Ват каччăна хěр савмасть,
Ухмах! –
тенě аккăшě Уках.

Апла – и те, капла – и...
Иван шурать шутласа.
Хушăран вăл юрлать – и?
Ярать тăсса
Купăса.

Юрри пур ун ěлěкхи:
– Тěввик – тěввик тăмани
Йăви тěлне пěлмесěр
Уй варринче çěр каçнă.

Шур ураллă яш ачи,
Шур ураллă яш ачи
Улах тěлне пěлмесěр
Сив мунчара çěр каçнă.

Купăс натăрт! нăрлатса
Ларать пачах хупăнса.

Миххи шăтăк сас памасть,
Хуçи те пит калаймасть.

Калама та кирлех мар,
Хěрсем урăх уншăн мар.

Ялта купăс кирлине
Иван пěлет ахăртнех.
Кěçех кӳршěн туй пулать.
Ялтисем çав Ивана

Ирĕксĕртен хăвалаç.
– Шыра-ха юсакана.

Çӳре-çӳре вăл ыйтса
Тупать Таланцева.
Хăямат хăй тупăнса
Тарăхтарать Яковлева.

Иван Яковлев часах
Каять йăтса купăса.

Имшер Шемшер таранах,
Талант пурăнать ăспа.
Малтан ăна укçа пар!

Укçине илет унран
Хĕрхенмесĕр панăран:

Туй тумалла кӳршĕре:
Тăван хакĕ – ĕмĕре.

Туй пуличчен халь Иван
Купăсне илме каять.
– Çук, тăваймарăм – тăван.
Туйччен юсасчĕ, а – яй!
(Ĕнсе хыçать талантай).

Çук. Пулмарĕ Таланцевран
Хут купăса парасси.
Сутса янă вăл кайран:
Ун таланчĕ – çынăннипе пуясси.

Вăт çапла пĕтет хайхи
Пĕр хут купăс малтанхи.

Пурпĕр Иван хуçăлмасть:
Лаша тӳрех хăмламасть.

Укçа вут-чул кастарать;
Хĕлĕпеле тир хырать.
Вăрттăн пуринчен – сутма –
Тир тиет çуна çине.

Кăна ёлкĕрет курма
Кÿршĕри старик Чине.

Турă, кÿршĕ – тăван мар:
Килнĕ халĕ суд тума...

Инкек килмест аякран –
Инкек – санăн айăкра.

Туй вырăнне – суд! –
Шыва кайса пут!..

Акă çитет савнăç туй!..
Ял -йыш, кÿршĕ кĕр! кĕрлет.
Чине ачи. –Ах! та ах!
Купăс ăçтан илмелле?

Хайхи каçать кÿршĕнех.
Ухмах тет-шим Ивана?
Вăл тустарчĕ Чинене.
– Манса кай эсĕ мана!

Манма-манмаççĕ вĕсем
Туй купăссăр пулнине.
Кăмак питлĕхне илсе
Таш ташларĕç туй кунне.

– Çав та кирлĕ вĕсене!–
Терĕç тĕрĕс пикесем.
– Калаçас çук ĕмĕрне:
Яла тĕп тăвĕç вĕсем.

Пикесем Иван чунне
Çемçетрĕç чăннех.

Иван чиксе укçине
Кайрĕ илме кармунне.
Тата тепĕр хут укçа
Сĕнет вăл Таланцева.
9

## Таланцев таланчĕ

Чăваш суйма пултарать,
Анчах хăрать Турăран.

Талант хура совеçне
Пĕлме тивет тин-тинех.

Ивана
Укçа пама хушмасть
Таланцев мăшăрĕ. Мĕн-ма?

– Эсĕ путсĕр те! Апла
Памастăн кармунне!
Миçе килсен те каллах
Курмастăн çын нушине!

Параймастăн эс ăна,
Сутса ятăн тахçанах!

Укçине пар каялла!
Ах, сан çапла пуймалла!..

Парса тат мĕн илнине!
Ăнлантарам эп сана:
Лекĕпĕр пĕр тĕнчене,
Суд тăвĕç саншăн мана.
Пар! укçине! Ивана!

Иван купăс тек курмасть.
Тивет татах тир хырма.

– Ĕçле. Ĕçле, Ĕçлеçи.
Ĕçлен пулсан кăна çи! –
Юрлать вĕлтрен кайăк та,
Çапла пурнать Иван та.

Çĕвĕпеле тир туса
Илчĕ Иван купăса.
– «Русский» ятлă ку.
Вырăссен – ши? Кур!

Пăхать тăван:– «Русский строй».
– Кўршĕ умĕнче не стой !–
тет Иван кулкаласа,
Купăсне турткаласа.

Темиçе хут каласан
Кайран çитрĕ хăнăхса.

Аванланнă калама.
Вăхăт иртнĕ авланма.

10

**Вербовкăна**

Ўснĕ çамрăк вăхăтпа,
Ялтан кайнă вакунпах.

– Ырлăх çитрĕ вырăспа,
Каяр эпир пуйăспа. –
тесе юрлаç пикесем
Вербовкăна кайнăçем.

Купăс янрать вырăсла
Хĕрсене ăсатнăçем.
Вырăсла вĕсем ăста,
Шăратаççĕ такмаксем:

– Волга долго, Волга долго –
Волга до Саратова.
У тебя и у меня
Нет уж провожатого.

На столе стоит стакан,
А в стакане – сода.
Расскажи-ка, гармонист,
Ты с какого года?

Песня вся, песня вся –
Песня кончилася.
У нас, миленький, с тобой
Любовь кончилася!

И- 44813
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Иван такмак кĕввине
Куçарать юрă çине.
Вăл тăсать ĕлĕкхине –
Матроссен çĕн юррине.

11

**Иван – поэт**

Чун аманнăран Иван
Юрă хывать самантран:

– Тинĕсре ишсе çӳреççĕ
Шурă çӳçлĕ матроссем.
Тинĕспе халь киленеççĕ
Пĕр-пĕринпе пуплесе
Юратмалла
Пикене асилнĕçем.

Купăса туртса яратăп,
Савăп сарă хĕрсене.
Пĕр хĕрне каç çавăрасшăн,
Тепĕр каç – урăххине.
Аптрамалла!
Саватăп саррисене.

Хутлă купăспа çӳретĕп,
Каç пулсан тухап вăййа.
Мĕншĕн-ши мана тиркетĕр?
Хăшĕнпе тăвас туя?
Аптрамалла!
Саватăп саррисене.

Купăса чунтан саваççĕ
Сар чечек пек пикесем.
Çавăн пек хама савасчĕ,
Е ытла та ватă-шим?
Аптрамалла!
Матрос сире кĕтет-шим?
Тĕнче тавра сапалаççĕ
Ĕçчен чăваш пикине.

Вырăссем те юратаççĕ
Чăвашăн чиперрине.
Аптрамалла!
Эпĕ те савап сире.

Тинĕсе те,тен, çитетĕр
Савнипе пĕрле пулма.
Аякра туйне ирттерĕр
Морякпа ыталанма.
Аптрамалла!
Мĕншĕн-ши эп моряк мар?

## 12

## Юмăç карчăк

Чăваш евчи – апăс кинеми
Пур çĕрте те: – Килем-и?

– Инке арăмĕ – ялтах –
Сони текеннийĕ пур.
Ал-ури епле ăста.
Хайне тытма пĕлет, кур, –
тесе çитет апăс кинеми
Иван купăссă патне.
Вăл пĕлет – ун пур теми –
Савтармалла хăй хĕрне.

Мĕнех Иван килĕшет:
– Аптрамасть – хашкамасть.
Сывах пулсан пĕрлешес:
Халь тин суйлăн-ши кама?

Кăмăлне кура хитре,
Ун пекки çуках, элчен.
Пур та хĕрĕ – чиперех
Ӳстерет ăна пĕччен.

Иван авланчĕ. Ĕçчен
Арăм лекрĕ халь ăна.
Тухмасть тек вăл килĕнчен
Хĕр шырама – хăтана.

Чун вӗрет те, ӗҫ вӗрет:
Килӗшӳ ҫав пур вӗсен.
Вӑл пулать савма пӗлсен –
Савнине тупра тесен.

13

**Кӳршӗри тӑшманлӑх**

Пӗрре ӗҫ ӑнсан,
Курайма‌ҫҫӗ тепринче.

Анни хӑй те пӗлет-ха –
Пӗрне пулах телей ҫук.
Вӗҫӗм вӗсленет вӑл халь:
Йыт ами пек тытрӗ ҫул.

Ялти хӗрарӑмсене
Пухрӗ пӗр каҫ хӑй патне.
Тапратрӗ ват нервсене –
Чирӗ кайрӗ ӳпкине.

Курайманлӑх ҫав каҫран
Ҫитрӗ инке арӑмне.
Ӗҫнӗ пур хӗрарӑмран
Инкек килчӗ ун килне.

Пӗри тӑпрапа перет
Сонин чӳречи ҫине.
Тепри: – Тухса кай ялтан!.. П- памасан эрех.
Виҫҫӗмӗшӗ тикӗтпе сӑрларӗ алӑкне.

– Ҫурӑлса тух! Хыпса ҫун эс!
Шуйттан пек телейлӗскер!
Пӑшалпа сана парес:
Мӗн тери эсӗ тискер!

Харсӑрланчӗ халь инке,
Итлесе ывӑннӑскер:
– Вӑй-хал ҫук чӑтма текех! –
Хирӗҫ тӑчӗ: –Ку! Мӗскер-р?!.

Унччен йăваш инкене
Курма вĕреннисем
Кĕтмен паян ирхине
Хăйсене хӳтерессе.

Аялти кĕпе-йĕмпе
Иван та тухать siксе
Урамалла сенĕкпе
Çаратаççĕ пуль тесе.

Çавăнтанпа «йытăсем»
Тек вĕрмерĕç нумайччен.
Анчах вăхăт иртнĕçем
Анни эрех ĕçтерсен,

– Ивана вăл çавăрса
Пурнăç турĕ çĕр туни!
Лектĕрех вăл авăра!
Шăтăк чав эсĕ, Анни!

Илтнĕ хăлхана илтмен
Туса пурăнчĕ Сони.
Ӳсĕрри ал çĕклесен,
– Текех пулмăп эп конни! –
(тесенех хăратчĕç пурте хăйсемех).

Тĕрек вăхăт йăвашать,
Пĕчĕкленет Мăн Шăнар.
Курайманлăх хур тăвать –
Пырса çапать Ивана.

Усал тума пĕлекен
Çилне ниçта хураймасть:
– Иван пĕттĕр! – инкеке
Куртăрччĕ вăл касамат.

Тыттарчĕç милицине:
– Иванăн пур «шур» наган, –
терĕç арăмсем çине-çинех.
– Лекет кашнинех кайран! –

(хăрамарĕ сар Иван).

Шăпăртах свидетельсем...
Сирĕлчĕҫ милицирен.
Хăрарĕҫ пит суйнăҫем
Касамата лекесрен.

Ҫумăр питли лăпланмасть:
Хĕртсурт мар, ват хĕр тени.
Шутлать татах хур тума –
Пур ун хĕтĕртекенни:

Анна сивĕ пĕлĕт пек
Никама та ыр сунмасть.
Хаяр тулнă чунĕпе
Ырă мĕнне уйăрмасть.

## 14

## Ватлăхри юрату

Урҫа пĕччен ватăлмасть:
Хăй валли пĕрех тупать.

Ҫамрăкки те, ватти те –
Юратушăн пурте...

Ҫил ҫаврăнать, улать,
Кутăн чунлă ҫын пек
Шăртланать.
Тĕнче хĕрне кастарать –
Урамри ҫамрăксем манаҫ кулла.

Пулать-иҫ ҫавнашкал:
Яла ҫулăм хыпнă пек.
Кассăн килчĕ ҫавра ҫил –
Ҫĕкленчĕ валашка.

Анни ҫакна курсан
Чупрĕ тухрĕ хыҫран.

Çамрӑксем тарса пӗтсен
Тухрӗ Петруç урçа.

Хуйхи пысӑк кӑçал:
Вунсаккӑртах юлчӗ çемйисӗр, пӗччен.
Çуратма тӑрсан ача
Арӑмӗ вилет-çке ун.
Вилет ачи кӗçех ав.

Пӗчченӗн пурнӑç мар,
Ӑнланать çакна вӑл.
Петруç тухрӗ çӑлтӑр шутлама:
Сыхлакан тухмӗ урама.

Кӗçех вӑл унта курать:
Анни тaçталла чупать.
– Ватӑсен те кӑтӑк пур?–
Анниреn Петруç кулать.

Ури çӗре лекмест,
Куçӗ-Анни çинче.
Курӑнать каçхи упа
Сарлака çӗмел пек.

Ват хӗр хӑранипе
Калаçса тӑмарӗ.
Куçӗ витӗр курманран хӑраса-ши?
– Петруç, эс-и, чиперскер?

Чӑн чиперех Петруç.
Савнӑ ӑна пурте.
Арӑмӗ хитре Маруç –
Пӗтрӗ ун Кенгуру.

Мӗн тӑвас? Хуйхи пур,
Пӗчӗк мар – виçме çук.
Çавӑнтанпа вӑл кулмасть;
Кӑтӑкӗ те – те пур?..

–Эсех пултӑн-и ара? –
Ыйтать-ха каллех Анна.

Урҫа: – Эпӗ-ха, ан хӑра.
Пур-им кам сан патра?
...........................
– Ан калаҫ кирлӗ мара.
Кам халь пултӑр ман патра?
Кайрӗҫ пӗрлешсе ҫил пек.
Кӗчӗҫ хӗр патне, Анна
Кантӑк карри карать.
..................................
Урам ахӑрмасть халь:
Кутӑн ҫил те лӑпланса.
Анна тулалла пӑхать,
Шырать вӑл валашка.

Уншӑн каччӑ кӗни
Пӗр интереслентермест.
Урҫа куҫҫуль кӑларни
Тӗлӗнтермест: йӗрин.

– Эп те пӗччен юлса,
Вӑл ман куҫҫуле курман.
Халь тин пулмасть юратса –
Ҫын пурнӑҫӗ – юла.

Шухӑшлать ҫаплах Анни.
– Ай! – хӑрарӗ урҫа тӗкнипе.
Тапӑлтатрӗ чӗре ани:
Кирлӗ-ҫке каҫ – савни.

Халь ларчӗҫ калаҫса –
Пӗччен йывӑр ялта.
Хӗр те ларчӗ ватӑлса,
Урҫа юлӗ... хӑрса.

Анни пурпӗр именет: – Мӗн – ачам,
Эсӗ ытла ача.
Питӗ ҫамрӑк-ҫке...
Ирттерме манпа каҫа.

Ҫапла.
Авланса курни

Ирĕке ярать хăйне.
Каччă ват хĕре
çил пек аллать.

Кÿтсе çитнĕ ÿтсен
Чунĕсем те ясар.
Тытса чарĕ-ши кам?
Вĕсем – хĕрсе кайнă утсем.

Чунсем кÿлешсен, тен,
Пĕри тепĕрне шанмасть.
Петруç хăрамасть;
Анна – ялти этем,
Çын чĕлхи хăратать питех.

Кÿслемкке Петруç ак
Пит хăюлланчĕ тинех.
Хĕр пилĕкне аврĕ те –
Ак кăкăр – пĕр пурак.

Хитре чăмăр кăкри...
Нихçан курман ют алла.
Салтăнчĕ чĕчĕ çакки –
Сиксе тухрĕ чĕри.

– Мĕн тери хитре ах... –
Анни çамрăкланса пăшăлтатать.
– Петруç, эс питĕ пылак...
Пылак эс пылсăрах...

Мĕн тăвас тен каçа,
Ăна тытса чарма çук.
Сая ямарĕ каçа
Киле килнĕ аçа.

Анчах ял хула мар:
Тухнине те кĕнине
Сыхласах-çке тăраççĕ:
Майĕ çук тĕл пулма.

Çын чĕлхи этеме
Пĕтерет-çке ĕлĕкрен.

Тен пулĕччĕ килĕшӳ –
Этем тени мемме.

Аннан та чирлени
Йăлт иртех пуçларĕ пек.
Аса килсен çил эрни –
Хатĕр: каччă килин.

Корита тусá пани
Эрне иртрĕ пулмаша.
Йăпанать унпа Анни:
Ак вăл – Турă çырни.

Анна халь çывăрмасть;
Урçан каймасть пуçран çиллĕ каç.
Кирлĕ марах ăнланма –
Вĕсем пуçлаççĕ юратма.

Ун-кун пур юрату.
Еплерех-çке вăл урçа!
Ӳтре чуптарать пăрçа –
Хĕрӳ чĕре – асту!

Вăт çапла Петруçça
Чиртен чĕртет Аннине.
Манса кайма хуйхине
Улах çӳрет урçа.

Сукмакĕ çатма мар,
Унран каях мар.
Анни кĕтет çав çыннах,
Леш çитсен пуçлать ăна авма.

Халь Аннана аван,
Илемленет кашни кун.
Петруçа кăна савать:
Ӳте кирлĕ хуçа.

Анна шăппăртах пурăнать.
Юрамасть-çке пĕлтерме.

Пӗлтерсен ялти ҫынна
Ӳт-чунсӑр хӑварӗҫ ӑна.

Кама калӑн ӑна?
Хӑвнах сиввӗн ятлӗҫ ҫав.
Ӑнланать ҫакна Анна:
Шарламасть никама.

– Уйӑх та йӑпанать
Хӑй килнине пӗлтерсе.
Килет Петруҫ чун курса,–
Анна ҫапла шутлать.

Каҫ илемӗ килӗшет
Пӗр-пӗрне ӑнланнипе.
Ик чӗре вӗрет хӗрсех:
Пӗрин ӗмӗт уҫӑлать,
Теприн, шел, вӗҫленет.

Ах, ӑҫта килӗшӳ?
Ҫулсем те пӗр пек мар-ҫке.
Вӑхӑтлӑхри пӗрлешӳ –
Ниҫта ҫук лӗпӗш ӳт.

Хӗрӗн пуҫ ҫаврӑнать,
Шутлама та вӑл хӑрать.
Уҫсан Петрух хапхана
Чупсах тухать Анна.

Перӗнме вӑл хӑрать:
Ватлӑхри ӳт вӑранать.
Каччи алӑкран кӗрсен
Сӑрапа хӑналать.

Ват-хӗр каччӑпа
Туять вун ҫиччӗри пек.
Ҫемҫен каччи сӑртӑнсан,
Тайӑлать хӗр лӑпах.

Вӑл та ку – юрату –
Сӑпкари пек туйӑнать.

Чӳхентерет ӳт-пӳне,
. Чĕринче – тату.

Анчах... пулать анчах...
Тĕнчене кисретес,
Çынсене пĕлтерес
тесе Петрух амăшĕ – Хĕрес
Çĕр çĕмĕрет, кĕр! кĕрлет –
Телейе тăм тивтерет –
Анна чунне пĕтерет.

Çут ӳт сӳнет пăчах!
Çаврăнса вăрт та вăрт
Каларĕ тем те пĕр
Аннана хăртас пек.
Çухрашса кун та тепĕр
Хăйĕн ывăлне те: – Çĕр!–
тесе пĕтерчĕ вăл.

– Ай-уй! – хĕрарăмсем,–
ун пек мар пуль? Суять пуль.
– Тăн кĕртесшĕн ывăлне
– Е, парасшăн чĕчĕ тепĕр?..
– Ай, Тур, çырлах, Хĕрес!
– Ырă марах кун пек.
– Ма çылăха сан кĕрес?
– Ма варалас ват хĕре? –
терĕç пĕрре мар – çĕрех.

Çавăнтанпах улать
Кайрикассен пĕр йытти.
Арçынсем ялта кулаç:
– Эс, Петруç,
куçна уç!

–Хĕрарăм хытă астарать.
– Хĕр чĕлхи çуллать пулсан,
Арçын пуç çухатать.

Кам-кама астарать?

Анна аран-аран:
Йывăр чирĕ – йывăç çинчи мар–
Çынсен чĕлхи чире ярать.

Камăн мĕн ыратать...
Аннин чунĕ çурăлать.
Петрух ăнах юрататать:
Вăл хĕр курман ытлах.

Майĕпен тĕлкĕшет
Çунакан юрату.
Ăнланаççĕ иккĕш те:
Çăлма çук-мĕн çунса кайнă лĕпĕше.

Çын вăйлă чунĕпе,
Чун чирлесен хăрса кайнă патак пек.

15

## Шурă шухăш

Ват хĕр ларать ватăлса
Пурăнсан вăл хурланса.

Инçе-инçе вăрман çинче
Каçпа кун çути çĕтет.
Хаваслă вăйă картинче
Анни Ивана кĕтет.

Вăрманти пĕлĕт тĕтри
Каять вăрман çийĕпе.
Ват хĕрĕн сăмса тутри
Шăлать куççуль ĕмрипе.

Шыва кайса шывсăр килен
Витре тĕпĕ пулмасан.
Анни пекех ларса йĕрен
Турă телей памасан.

Анни йĕре-йĕре хайхи
Кайрĕ вĕри чире тем.
Тăма та манчĕ: чĕререн

Хуйхӑрсан пӗтет этем.

16

**Вӗреҫлен**

Курманнин курас,
Курсан тарас килет.

Вӗҫет ҫӳлте ӑҫтаха...
Шӑнар кӗрлет: –Ӑҫта-ха?..

«Каҫхи каччӑ» юратать.
Вӑл килет ҫӗрлерсерен.
Хӗрӗ начар курӑнать:
Каять чӗрӗ вӑй чӗрен.

Пур кӳрши ҫакна сиссе
Ҫакрӗҫ пӑшӑлти пӑтти.
– Айӑпли Сони, – тесе,
– Инке арӑмӗ пӗтин!

Уншӑнах Анни пӗччен.
Хӑрса кайрӗ хурӑн пек.
Ҫумӑр тӗслӗ. Виличчен
Ҫынран тухрӗ пусӗпех.

Тӗлӗннипе Укахви
Чутах тухман ухмаха:
Аннин каҫсеренех «Вий» –
Курма пулать ӑҫтаха.

Ӗненмесӗр ват пусҫпа
Хӑй курасшӑн Укахви.
Шӑвать ҫӗрле хырӑмпа.
Пӑхать. Кӗҫ… сасартӑк! – «Вий».

Ак ҫӳлти патшалӑхран
Тухрӗ ҫап-ҫут ӑҫтаха.
Пы–сӑк пуҫлӑ, вӑ – рӑм ҫӗлен ылтӑнран
Сапать хӗлхем. Ак ваҫка!

Пачӑшкӑ,.. ӑҫта-ши эс?.. Тур, ҫырлах.

Курас текен кускалать хăранипе.
Курăнни – ырра марах!
Килне кĕрес тет чипер.

Кун хыççăн кун иртет.
Укахви урама та тухаймасть.
Тухсан калаçмасть пĕртте:
Чĕлхи çĕтнĕ: шарлаймасть.

Çапла Турă калать тет:
Ан кулян та, ан ятлаç.
Ан ус пуçна пур çĕрте –
Усалран çапла сыхлан.

Çынна усал тăвиччен –
Ыр тунине мĕн çитет?
Ылхан пулса çĕриччен
Ыр курса çӳре çӳлте.

Çапла. Мĕн вĕрентсен те,
Хăлхана çеç кĕрет-çке.
Пуçăма çитерсен те
Кирлĕ марри çĕнет-çке.

Чăвашăм кутăн пулни
Атила асилтерет.
Юн! ытла вĕри чупни
Сар чăваша пĕтерет.

Пăлхамăр чăваш пулни
Сисĕнет пирĕн юнра.
Начар – этемлĕх пĕтни –
Кун-çул юлĕ кашкăра.

Ытлашши хыт юратнишĕн,
Каçса кайса шутланишĕн
Турă
Уйрăм пил памасть,
Тытса купăс каламасть.

Клавдия Ивановна Вишневская

ЧУНЛӐ КУПӐС

(Душевная гармонь)

*Поэма*

Компьютерная верстка *А.Ж. Арамян*

Подписано в печать 20.03.05. Тираж 500 экз. Бумага писчая.
Гарнитура ArialCyr. Заказ № 135.

Отпечатано в типографии.
428000, г. Чебоксары, ул. К. Маркса.

25,00

